К 81
А 86
Ч-36663




# Чăваш БУКВАРĔ


Аа Ӑӑ Бб Вв
Ёё Жж Зз
1976 11
Колобок
Мм Нн Оо Пп
Уу Ӳӳ Фф
Щщ ъ Ыы ь


Гг Дд Ее Ёё
Ии Йй Кк Лл
Рр Сс Ҫҫ Тт
Хх Цц Чч Шш
Ээ Юю Яя

КФ

К 81
А86

Т. В. АРТЕМЬЕВА, М. К. ВОЛКОВ, Л. П. СЕРГЕЕВ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# Чӑваш БУКВАРӖ

Чӑваш Республикин Вӗрентӳ министерстви
шкулсенче усӑ курма йышӑннӑ

Хушса ҫӗнетнӗ 10-мӗш кӑларӑм

д/х

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2000

УДК 373.167.1
ББК 83. Чув я 72
А 86

*Федеральная программа книгоиздания России*

ПРОВЕРЕНО
20 04

4-36663

НАЦИОНАЛЬН... ...ИОТЕКА
ЧУВ...
РЕСПУБЛИКИ

А $\frac{4306020200-32}{М 136 (03)-2000}$ 1—2000

ISBN 5-7670-1040-4

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2000










































ТЕТРАДЬ
































?















?





?



















?









?

Ч-36663

НАЦИОНАЛЬНА ТЕКА
ЧУВА
РЕСПУБЛИКИ
























?



















Аа
Аа
Аа
Аа



а

# Аа



а





а

ан на　　ун ну　　ăн нă



а|на　　у|нăн　　у|на

Ан|на　　ăн|нă　　у|на|нă

# Нн







— Анна, ан!

Анна аннă.



л а □ а́

ал ла    ӑл лӑ    ул лу

а|ла    а|лӑ    у|ла

ал|ла    ал|лӑ    ан ула

# Лл



□ ӑ □ а □ а́ л



Ула □ уланӑ.

— Ула □, ан ула!



ӑна ________________.

ам ма ăм мă ум му



а|ма ма|на у|лăм
ă|на ма|ла ă|ман

м ă л а □ у́ □

# Мм



Ула□ăн 3  .
Ула□ аманнă.
Анна ăна ___.



м у л □ á □



□ у́ л ă

ат та    ут ту    ăт тă

| | | |
|---|---|---|
| тăн | ту\|лă | ут |
| тун | ту\|тă | ут\|ăм |
| тат | тă\|лă | ут\|лан |

# Т т





т ă □ н á

Анна □ăлан утланнă.
— Антун, ут утлан!
Антун ут утланнă.
—Утăм, малалла ут!

та тан ту тул тă тăм



á □ ă

| | | |
|---|---|---|
| тăм | Ан\|на | тум |
| тă\|ма | у\|нăн | тум\|ла |
| тă\|ман | ун\|тан | тум\|лан |



Анна тăнă.

— Анна, тумлан!

Анна тумланнă.

Унтан  тумланма ___.

ту□ă у□ăм т○н



п ý л ă

ап па    уп пу    ăп пă

| | | |
|---|---|---|
| пăт | туп | ту\|та |
| пă\|та | ту\|пă | ту\|тă |
| пă\|тă | ту\|па | туп\|нă |

# Пп



п у _ á





п ý _ т ă

— Аппа, пăтă-ă-ă!
Анна Антуна пăтă панă.
Антун пăтта тутаннă.
Пăтă тутлă пулнă.
Антун лăпланнă.

ап тап уп туп ăп тăп
па пат пу пут пă пăт



Пă|ла пу|лă
пă|лан ă|ман
па|лан тă|ман








Атăл анлă.
Унта пулă нума☐.
Антун пулла аннă.
Пулă ăман ____.





ш а п á

аш ша ăш шă уш шу

ă|шă пу|лă
ă|шăн пу|лăш
ă|шăн|нă пу|лă|шу

# Шш



ш ă л á н



Аллăпа Ануш шăлан татнă.
Анушăн  тулнă.

Аллăн  тулман.

— Ануш, мана пулăш!

ша шан шу шут шă шăп



ă|шă та|шă
ă|шăн таш|ла
ă|ша|ла таш|ла|нă

а́ □ ă ш









Ануш аппа  □аланă.
Антун ташланă.
Анна ташлама □ăтаннă.
— Анна, ташла, ан □ăтан!
Анна та ташлама тăнă.



ар ра ур ру ăр рă

| | | |
|---|---|---|
| лар | у\|ра | ар\|лан |
| пар | пу\|ра | ар\|ман |
| тар | у\|рам | Ра\|ман |

р а □

# Рр



Урамра ăшă.
— Раман, урама ту □ !
Шурăпа Раман лашалла ___.
Раман лаша пулнă.

ар мар ур пур ăр тăр



| | | |
|---|---|---|
| пăр | у\|ра | шу\|рă |
| пă\|ра | ур\|па | шу\|рат |
| пу\|ра | у\|ра\|па | ту\|рат |

ш ӑ́ п ӑ □



Антун арман тунă.
Раманăн урапа пур.
— Антун, мана арман пар!
Антун Рамана арман панă.
Раман ăна урапа панă.

ар□ан у□а пă□а



ы□ ă□

ыт ты ыш шы ыр ры

| | | |
|---|---|---|
| ы\|рă | ты\|рă | ы\|ран |
| ы\|раш | шы\|ра | пы\|рам |
| ыл\|тăн | ы\|там | шыр\|лан |

# Ыы



**Утарта.**

— Антун, ыран ман пата утара пыр.
Антун утара пынă.
Унта □ăл ____ пулăшнă.
А□лашш○ ăна пыл панă.

ыр пыр ыл пыл ыт тыт



ы р а́ ш

ты|мар ыт|ла ы|рă
тат|ма ăн|нă ты|рă
тыт|ма пул|нă ыл|тăн
туп|ма шăн|нă тул|нă



**Ыраш.**

Анна аппа тырă □ырнă.
Унăн ___ ăннă.
Шурăпа Раман тырă турттарнă.
Шурăпа Раманăн та ___ ăннă.
Ыраш ытла ăн□а пулнă.



в ă л т á

ав ва ув ву ăв вă ыв вы

| | | |
|---|---|---|
| лав | ы\|вăт | вы\|рăн |
| тав | ы\|вăл | вă\|рăм |
| шав | тă\|вăл | вăр\|ман |

# Вв



л а в



## Шывра.

Шыв ăшă та тăрă.
Шывра ытла та аван.
Павлушпа Раман шывра.
— Павлуш, ан шăмпăлтат!

ва вар  ву вут  вă вăт



| | | |
|---|---|---|
| шав | вырт | ву\|ла |
| шав\|лă | вы\|рам | ву\|лам |
| шыв\|лă | вы\|рăн | ву\|лăп |

в а □ á □



## Ан шавла!

Ануш аппа ывăннă.
Вăл □ анма выртнă.
Павăлпа Анна шăппăн вуланă.
— Мăрмăр, ан шавла!



х у р

ах ха ух ху ăх хă ых хы

| | | |
|---|---|---|
| ут | хур | хă\|на |
| хут | хыр | хă\|мăл |
| хурт | хул | хăм\|ла |
| у\|тă | ху\|ла | хă\|мăр |

# Хх



## **Вăрманта.**

Хурăнлăхра хурăн  шырарăмăр.
Хырлăхра шурă  татрăмăр.
Хутăш вăрманта  тупрăмăр.
Хамăр  хăвăртах тултартăмăр.
Унтан ăмăртмалла  татрăмăр.

ха хам ху хут хы хыв



| | | |
|---|---|---|
| хум | у\|хă | ху\|ра |
| тум | у\|лăх | ху\|ран |
| тум\|ла | ху\|ла | ху\|рăн |
| тум\|хах | ху\|лă | ху\|ра\|ма |

х á ă



ула
хура
шурă







**Улăхра.**

Павăл улăха аннă.
Вăл хур пăхнă.
Анна ăна пулăшма пынă.
Вăл ____ хулăпа хăваланă.
— Анна, хуртан ан хăра!

____ хур ____ хурăн ____ хуран



ш ă ш ◯

ин ил    ир им    иш ит
ни ли    ри ми    ши ти

ир    тир    ты|рă
вир    пит    Ти|мур
мир    Ти|муш    пан|ул|ми

# Ии



в ◯ р





п а □ ◯ у л м ◯

**Тутлă панулми.**

Ануш аппа панулми татнă.
Тимур ăна пулăшнă.
Павлуш арман авăртнă.
— Павлуш, панулми тыт!
Панулми тутлă-и?

пы пи хы хи
пыр пир хыр хир



п ă ш

тă|ри тум
пă|ши тум|хах
шă|ши тум|тир



**Маттур, Тимуш.**

Анна   пăхнă.
— Аппа, пăрăва хамах шăварам-и?
Тимуш пăрăва ăшă шывпа шăварнă.
Унтан вăл ăна утă панă.
— Маттур, Тимуш, — мухтанă Анна.



у п ă т ○

та па ма на ла ра
те пе ме не ле ре

а|тă Ан|на шав|ла
ат|те ан|не шев|ле
ат|тем ан|нем хит|ре

# е (э)



в и т р ○



**Парне.**

— Марине маттур.
Вăл хитре  тунă.
Ăна  парам.
— Атте, пире те пар!

пир тем мел

эп|ир э|тем э|мел

э|реш эр|не

Эр|хип Энт|ри

Эн|тип Эл|пи



мéл

# Ээ





решмéн

## Тавах, аппа!

Элпи хуларан таврӑннӑ.
Амӑшне вӑл тутӑр панӑ.
Энтип валли унӑн вӑлта пур.
— Тавах, аппа! — тет Энтип.



○ н é

| | | |
|---|---|---|
| лă мă | нă рă | пă тă |
| лĕ мĕ | нĕ рĕ | пĕ тĕ |
| вар | ва\|тă | пăл\|тăр |
| вăр | вĕ\|тĕ | пĕл\|тĕр |
| вĕр | вĕл\|ле | пĕ\|ле\|тĕр |

# Ĕ ĕ



## Пулăра.

Хĕвел тухман. Таврара шăп.
Хĕветĕрпе Павлуш пулăра.
Хĕветĕр  тытнă.
Павлушăн вăлтине  ле□нĕ.
Пулăра ларма мĕн тери аван!

? Тулĕ — тулă, ăшĕ — пулă. 

пăр вăр тăм шăл
пĕр вĕр тĕм шĕл

| | | |
|---|---|---|
| ĕм | тă\|рă | вĕ\|ри |
| ĕ\|мĕт | тĕ\|рĕ | вĕ\|рен |
| ĕ\|мĕт\|лен | тĕт\|ре | вă\|рăм |



т ĕ р ĕ



## Ĕшне.

Марине амăшĕ тĕрĕ тĕрлет.
Тĕрри питĕ хитре.
Ĕшне тулли хĕрлĕ  .
Тавралла шурă хурăн□ем.
Унтах шĕшкĕ тĕмĕ□ем.
— Анне, лĕпĕш тĕрлем-и?



л ◯ п ◯ ш



□ л о н

ас эс ӑс ыс ис ус

са се ӗс сы си су

сӑ|вӑ сӑ|мах у|сӑ

Сӗ|ве си|мӗс пу|сӑ

сы|вӑ сӗ|лӗ су|ха

# Сс



**Сухара.**

Славӑн ашшӗ сухара.

Вӑл ыраш пуссине сухала□.

Ывӑлӗ те ашшӗпе пӗрлех.

— Атте, эпӗ те сухаласа пӑхам!

— Апла пулсан ман вырӑна лар!

са сă сĕ су сы
сан сăр сĕр сул сып



□ е х е́ т

сы|вă
си|вĕ
си|вĕт|рĕ

ăс|та
хи|сеп|лĕ
хи|сеп|лет





Ăвăс____.



Сурăх____.

**Туссем.**

Сантăрпа Тимуш пĕр тантăш.
Сантăр улттăра.
Тимуш та улттăра.
Вĕсем питĕ туслă.
Туссем ра□ета тăвасшăн.
— Сантăр, эсĕ савала. Эпĕ сăрлам.



к у р а́ к

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ак | эк | ăк | ĕк | ык | ик |
| ка | ке | кă | кĕ | кы | ки |

| | | |
|---|---|---|
| сак | кас\|ка | вă\|кăр |
| сик | кĕс\|ке | мĕ\|кĕр |
| тĕк | кĕс\|мен | тĕ\|кĕр |

# Кк



**Автан.**

Пирĕн пысăк автан пур. Вăл мă□не тăсса: «Кикки-рик-ку!» — тет. Киккирикĕ пысăк. Ури тĕклĕ. Сăмси шĕвĕр.

Сирĕн автан мĕнле?

? Автан авă… . Кăвакал нартла… .





п а ш а́

# Кăмпа.

Верукпа кăмпара пултăмăр. Эпĕ хĕрлĕ кăмпа татрăм. Ытла хитре вĕсем. Тунисем вăрăм. Шлепкисем пысăк.

Верукăн кăмписем вĕтĕ.

— Аван кăмпасем тупнă эсĕ, — тет анне Верука.

— Манăн кăмпасем тата хитререх! — тетĕп эпĕ аннене.

— Шăна кăмпи татнă эсĕ, — терĕ анне.



? шурă кăмпа
шăна кăмпи
хурăн кăмпи



○ п л é

ӳт тӳ ӳп пӳ ӳс сӳ

| | | |
|---|---|---|
| у\|хă | тус | у\|лăм |
| ӳ\|хĕ | тӳс | ӳ\|лĕм |
| у\|сă | ку\|лă | ту\|рам |
| ӳ\|сĕп | кӳ\|лĕ | тӳ\|рем |

# Ӳ ӳ





## Ӳссен эсĕ кам пулатăн?

Павлуш ӳссен тухтăр пуласшăн.

— Эпĕ тракт○рист пулăп... — ĕмĕтленет Петĕр.

— Эпĕ шутламан-ха. Ӳлĕм калăп, — тет Марук.

Эсĕ ӳссен кам пуласшăн?

туп тӳп шут шӳт



○ х ё

| | | |
|---|---|---|
| у\|ла | ту\|ră | пу\|лă |
| ӳ\|ле | тӳ\|рĕ | пӳ\|лĕм |
| ӳп\|ле | тӳ\|рем | ту\|сăм |
| хӳ\|ме | ту\|рам | тӳ\|сĕм |






## Кӳлĕ.

Улăхра пысăк кӳлĕ пур.

Ун тавра — хурăнлăх. Шыв хĕррипе хăмăш ӳсет.

Кӳлĕ тарăн, шывĕ тăрă. Эпир кунта шыва кĕретпĕр.

Кӳлĕре кимĕпе ишме те аван.



□ ă к ă р

ça çe çă çĕ çу

çар çеç çăр çĕр çур

су|ха куç у|çă

çу|ха çăл|куç ӳ|çĕ

çӳ|хе çĕ|лĕк кĕ|тӳ|çĕ

# Çç



**Çуллахи çумăр.**

Хĕвеле пĕлĕтсем хупларĕç. Тавралăха тĕксĕм сăн çапрĕ. Çил кашласа иртрĕ. Çине-çинех çиçĕм çиçрĕ. Аслати авăтрĕ. Шалкăм çумăр çума пуçларĕ.

Çуллахи çумăр ăшă. Çумăр хыççăн сывлăш уçă.





□ ă л

**Ваттисемпе мăнукĕсем.**

— Кукаçи, иксĕмĕр арман тăвар-и? — тет Павлуш.

— Тăвăпăр, мăнукăм, тăвăпăр, — тет кукашшĕ.

— Хăçан салма пĕçерĕпĕр? — ӳкĕтлет кукамăшне Ануш.

— Пĕçерĕпĕр, пепкем, пĕçерĕпĕр, — тет кукамăшĕ.

Кукашшĕпе Павлуш арман тăваççĕ.

Кукамăшĕпе Ануш салма тăваççĕ.

? Санăн кукаçупа кукаму пур-и?

Вĕсем ăçта пурăнаççĕ?



ч ё р ё п

ча чă чу чы чи

чан чăм чул чыс чир

| | | |
|---|---|---|
| чĕл | чăл\|ха | а\|ча |
| чĕ\|лĕ | чĕл\|хе | ар\|ча |
| чĕ\|рĕ | çăм\|ха | лар\|кăч |

# Чч



## Чĕпсем.

Нина амăшĕ чăх чĕпписем илсе килчĕ. Чĕпĕсене вир пăтти килĕшет. Вĕсем ăна хыпалансах сăхаççĕ.

— Чип-чип-чип! — чĕнет вĕсене Нина.

Чĕпсем ăна часах хăнăхрĕç. Паллană сасса илтсенех çиме васкаççĕ.





ч а к а́ к

## Чăлха ҫыхни.

Эпĕ анне пуҫланă чăлхана ҫыхма тытăнтăм. Ҫыхма пĕлмесĕр ҫипписене чăлхантарса пĕтертĕм.

Анне мана:

— Ачам, малтан ҫыхма вĕрен, унтан тин ҫыхтарăп, — терĕ.

чар
чă
чăл
чă

?

Ваттисен сăмахĕсем.

Ĕҫчен алă ĕҫ тупнă.
Аллупа ĕҫле, пуҫупа шухăшла.

ваш
шав
рăш
ха



с ў п ă н ь

н нь л ль т ть

су|пăнь
мă|кăнь
шу|кăль
ку|кăль

са|на
сă|нать
çу|нат
у|сă|нать

# Ь



## Тулă пуссинче.

Марукпа амăшĕ тулă пуссипе пыраççĕ.

— Анне, мĕншĕн пучахсем пĕрисем çĕрелле усăннă, теприсем çӳлелле пăхаççĕ? — тĕлĕнет хĕрача.

— Тулли пучах яланах çĕрелле усăнать. Пушши кăна пуçне каçăртать, — ăнлантарчĕ амăшĕ.

| ал аль | ăн ăнь | ат ать |
|---|---|---|
| хал | мă\|кăл | у\|тать |
| халь | мă\|кăль | çӳ\|рет |
| са\|хал | ту\|рат | ку\|рать |
| а\|халь | ту\|рать | ки\|лет |



м ă к ă н ь



## Çулла.

Хĕвел тухать, улăхать
çӳллĕ тусем тăррине,
хă□ çутипе ăшăтать
тăçти-таçти çĕрсене.

К. Иванов.



□ ы т ă

ай май ăй вăй уй туй
кай мăй суй

йăх йăм|ра хăй|ма
у|йăх йĕл|ме хăй|ра
ла|йăх йă|мăк сай|ра

# Йй



□ ă в á



**Кайăк йăви.**

Тимушпа Сантăр ирех вăрмана кайрĕç. Вĕсем хыççăн Улай та чупрĕ.

Вăрманта ачасем кайăк йăви курчĕç. Çăмартисем те пур иккен йăвара. Туссем вĕсене тивмерĕç. Тустарнă йăваран кайăкĕ сивĕнет. Çакна аван пĕлеççĕ вĕсем.

ут ун   ур ул   ух ус
ют юн   юр юл   юх юс

у|па   кай   ул|тав
ю|па   ка|ю   юл|таш
ю|ră   xă|ю   юр|лать



ю п а́

# Юю (йу)



## Икĕ юлташ.

Икĕ юлташ вăрманпа пынă. Вĕсен умне упа siksе тухнă. Пĕри йывăç çине хăпарса кайнă. Тепри çул çинчех юлнă. Вăл çĕре выртнă та вилнĕ пек пулнă.



ю м á н

юр юн ют юл юх юс

| | | |
|---|---|---|
| | ун\|кă | улт\|тă |
| ю[йу] | юн\|кун | юл\|таш |
| ю[у] | А\|нюк | И\|люш |
| | А\|нук | Пав\|луш |

Упа ăна питĕнчен шăршласа пăхнă та пăрăнса утнă.

Упа кайсан тепри йывăç çинчен аннă.

— Сана хăлхунтан упа мĕн каларĕ? — тăрăхласа ыйтнă вăл.

— Хăрушă самантра юлташĕсенчен таракансем — начар çынсем тесе хăварчĕ, — тавăрнă лешĕ.

Л. Толстой.

Ваттисен сăмахĕ.

Шанчăклă тусăн хакĕ çук.

## Юман.

Чăваш халăхĕ юмана авалтан юратнă. Юман çинчен вăл юрăсем, юмахсем хывнă.





х ă ю

Хăйĕн паттăр ывăлĕсене Юман ят панă.



Юман — питĕ çирĕп йывăç. Вăл шывра та çĕрмест. Унăн вуллипе пăрахутсем, вакунсем тунă çĕрте усă курăççĕ. Юмантан паха сĕтел-пукан тăваççĕ.

Юман питĕ майĕпен ӳсет.

Сыпăксенчен сăмахсем ту.

| | | | |
|---|---|---|---|
| пă | не | ça | па |
| ты | ши | ӳп | рăк |
| пар | мар | кăм | ле |

? Тулĕ — тимĕр, ăшĕ — нимĕр.





я л а́ в

ал ан ат аш ак ас

ял ян ят яш як яс

а|ка у|яв па|ян

я|ка ту|я мă|ян

# Я я (йа)



**Пирĕн ял.**

Пирĕн ял илемлĕ вырăнта ларать. Ял хыçĕнче юхан шыв. Аякрах та мар вăрман.

Ял варринче Культура çурчĕ. Юнашарах — икĕ хутлă шкул, ача сачĕ.

Пирĕн ял çулсерен ӳссе, çĕнелсе пырать.





т у

## Йĕлтĕрпе.

Йĕлме йĕлтĕр
йăлтăр-ялтăр,
шуса тухрăмăр
хире.

Юр пĕрчийĕ —
хĕл мерченĕ.
Эх, илемлĕ-çке
ирпе.

Ярăнсассăн
пит хавассăн
таврăнатпăр
килелле.

Таврăнсассăн,
кăшт кансассăн
кĕç тытатпăр
кĕнеке.

Мĕтри Васлейĕ.

Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.

...хĕл çитрĕ.
Тăвайккинчен ачасен... сасси илтĕнет.

хаваслă
сивĕ



х ă я́ р

ла ля на ня та тя
ал ял ан ян ат ят

| | | |
|---|---|---|
| | ву\|лать | шыв таппи |
| я[а] | вы\|лять | ача тяппи |
| я[йа] | ка\|ять | Я\|кур |



**Çурхи илем.**

Çырма юхать кĕрлесе
аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе
вылять унăн шывĕпе.

К. Иванов.

е э ен не эп пе

| | | |
|---|---|---|
| ен\|теш | си\|ен | ен\|чĕк |
| е\|шĕл | пи\|леш | Е\|люк |
| Эн\|тип | чи\|е | Эл\|пи |
| э\|мел | ан\|не | Э\|лĕк |



ч и е́

# Ее (йэ) (э)

## Пĕчĕк пахчаçă.

Елюксен пахчи пысăк. Пахчара улмуççисем, чие йывăççисем ӳсеççĕ. Елюк вĕсене тăрăшса пăхать.

Кăçал чие çырли ăнса пулчĕ. Ăна хĕлле çиме те нумай хатĕрлерĕç. Амăшĕ ĕçчен Елюка мухтать:

— Пĕчĕк пахчаçă пур пирĕн, — тет вăл.

? 1. Улма-çырларан мĕн-мĕн тăваççĕ?
2. Сирĕн пахчара мĕнле йывăççем ӳсеççĕ?



Е л ю́ к

эл ле ел эн не ен

| | | |
|---|---|---|
| э\|лек | Е\|люк | э\|рём |
| еп\|ле | кёс\|ке | ан\|не |
| э\|мел | мăрь\|е | чĕ\|ре |
| эр\|не | Марь\|е | вит\|ре |

## Анне.



Пире кам ачашшăн
лăпкать пĕчĕкрен,
чипер çын тăвасшăн
çунать чĕререн?

Кам ыррăн, хавассăн
пурне те пире
çапла лăш курмасăр
пăхса ӳстерет?

Кам пултăр? Пĕлеççĕ
туссем вăл камне:
вăл — пирĕн телей-çке,
вăл — пирĕн анне!

А. Ĕçхĕл.

Аннесем пире телейлĕ ӳстересшĕн.





н ч ё к

## Маринепе Энтип.



Марине ултă çулта. Вăл шкула çӳрет. Унăн Энтип ятлă шăллĕ пур. Вăл виççĕре çеçха.

Марине — ĕçчен хĕрача. Вăл хăех чăлха çыхрĕ. Ăна шăллĕне парнелерĕ.

Мĕн тери савăнчĕ Энтип!



Ваттисен сăмахĕсем.

Ăсти епле, ĕçĕ те çапла.
Ĕçченĕн ĕçĕ ăнсах пырать.



р е н

а у ы и е э ё о

| | | |
|---|---|---|
| Во\|ва | хор | О\|ля |
| Ко\|ля | ки\|но | ка\|ток |
| у\|рок | паль\|то | конь\|ки |

# Оо



## Чӗр чун кӗтесӗ.

Пирӗн шкулта чӗр чун кӗтесӗ пур. Унта кроликсем те пурӑнаҫҫӗ. Вӗсене Коля Смирнов пӑхать.

Коля кроликсене апать парать, читлӗхӗсене тасатать.

Кроликсем пахча ҫимӗҫ, утӑ ҫиеҫҫӗ.

от то ток ор ро хор



к р ◯ л и к

паль|то ка|ток

пи|о|нер конь|ки

хок|кей мо|тор

## Конькипе.



Вĕçсе пырап конькипе,
хăлхасем хĕп-хĕрлĕ.
Чăр-чар чĕрсе пынипе
пăр çийĕ пит йĕрлĕ.

Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
йăр та яр пыратпăр.
Алла-аллăн тытăнса
савăнса ярнатпăр.

Астумасăр хăш чухне
такăнса ӳкетпĕр.
Кĕç тăратпăр та каллех
çиçĕм пек вĕçетпĕр.

А. Çулĕç.

то тё ло лё фо фё



с а м о л ё т

са|мо|лёт
пи|лот
шо|фёр

фор|ма
мон|тёр
мо|тор

# ё(о)



## Мĕнле сăмах çырнă?

Виçĕ лётчик тĕл пулчĕç те калаçса кайрĕç.

— Часах вĕçетпĕр эппин, — терĕ пĕри.

— Тепĕр уйăхран. Эсĕ мĕнле сас паллинче вĕçетĕн? — ыйтрĕ тепри.





л ё т ч и к

— «М» сас паллинче.

— Эпӗ «И» сас паллинче.

— Эпӗ вара «Р» сас паллинче вӗҫетӗп, — сӑмах хушрӗ виҫҫӗмӗш лётчикӗ.

Пӗр уйӑх иртсе кайрӗ. Ҫынсем уява тухрӗҫ.

Сасартӑк тӳпе кӗрлесе кайрӗ. Сенкер тӳпере виҫӗ пысӑк сас палли ярӑнса пырать. Малта «М», ун хыҫҫӑн «И», юлашкинчен «Р» сас палли.

Мӗнле сӑмах пулчӗ?

Л. Кассиль.

Кирлӗ сас паллисем хушса ҫыр.

Л.ня л.тчик пуласшӑн. Вӑл самол.тпа вӗҫесшӗн.



## Кун ячĕсем.



Эрнере çичĕ кун. Кашни кунăн хăйĕн ячĕ пур.

Эрне тунтикунтан пуçланать. Çак кун эпир пурте шкула килетпĕр.

Эпир ултă кун вĕренетпĕр. Вĕсем çак кунсем: тунтикун, ытларикун, юнкун, кĕçнерникун, эрнекун, шăматкун.

Вырсарникун эпир канатпăр.

## Йĕркипе калама хăнăх.

— Кун ячĕсене йĕркипе калама пĕлетĕн-и? — ыйтрĕ учитель Алĕшăран.







Алёша чылайччен шухăшласа тăчĕ.

— Пĕлетĕп, — терĕ.

— Вĕсене йĕркипе кала, — хушрĕ учитель.

— Юнкун, вырсарникун, тунтикун, эрнекун, шăматкун... — тет Алёша.

Алёша кун ячĕсене йĕркипе калана-и?

Çырса ил те асра тыт.

Эрнере çичĕ кун. Вĕсен ячĕсем: тунтикун, ытларикун, юнкун, кĕçнерникун, эрнекун, шăматкун, вырсарникун.




| | | |
|---|---|---|
| па ба | пу бу | пи би |
| бан\|ка | бинт | бул\|ка |
| па\|ян | пи\|леш | у\|па |
| ба\|ян | би\|лет | Лю\|ба |

□ л о к н о́ т

# Бб



**Библиотекăра.**

Ĕнер эпир библиотекăра пултăмăр.

Пирĕн библиотекарь — Альбина Борисовна. Вăл пире библиотекăпа паллаштарчĕ.

Библиотекăра чăвашла, вырăсла кĕнеке нумай.

? Ани шурă, вăрлăхĕ хура.







а я

## Театра каятпăр.

— Борис, эсĕ шăматкун мĕн тăватăн?

— Эпир Люба аппапа балет курма каятпăр.

— Мĕнле балет пăхасшăн эсир?

— Аппа «Сарпике» балета кăмăллать. Вăл билечĕсене те илнĕ ёнтĕ.

— Эпир аннепе пуканесен театрне каятпăр.






Кирлĕ сас паллисем хуш.

| | | | |
|---|---|---|---|
| п ? | .улă | у.а | .улка |
| б | .алан | ку.а | .алет |





г о р н

ка га ке ге ко го

ла|герь
горн
ге|рой
ге|ор|гин

клум|ба
Гла|ша
Гри|ша
Га|га|рин

# Гг



_ е о р г и́ н






**Пĕрремĕш космонавт.**

Шупашкарта Гагарин урамĕ пур. Урам варринче — Гагарин палăкĕ.

Кам-ха вăл Гагарин? Мĕнпе чапа тухнă вăл?

Юрий Алексеевич Гагарин — космонавт, вырăс çынни. Вăл тĕнче уçлăхне чи малтан вĕçсе хăпарнă.



## Пытанмалла выляни.

Ачасем картишне тухрĕç. Хураçка та вĕсенчен юлмарĕ.

— Атьăр пытанмалла выляр, — сĕнчĕ Галя.

— Эпир Генăпа пытанăпăр, эсĕ пире шыра, — терĕ Коля.

Гена кĕлет хыçне пытанчĕ. Коля тĕм хыçне лăпчăнчĕ.

Хураçка ăçта пытанчĕ-ши?

## Шут сăвви.

Пĕрре — пĕрне,
иккĕ — икерч,
виççĕ — виçе,
тăваттă — тăваткал,
пиллĕк — пилеш,
улттă — улма,
çиччĕ — çилĕм,
саккăр — салма,
тăххăр — тăрна,
вуннă — тух!



□ о с к а́

та да то до ти ди

дос|ка
Ли|да
ди|ван
бри|га|да

до|ми|но
Ди|ма
ор|ден
бри|га|дир

# Дд



□ и в а́ н



**Хастар бригадир.**

Данил Степанович — трактористсен бригадирӗ. Вӑл кашни ирех ӗҫеваскать.

Ӗҫ нумай бригадӑн. Хӗлле тракторсене юсамалла. Ҫуркунне — чи хӗрӳ вӑхӑт, акасуха вӑхӑчӗ.

Данил пичче бригади ӑмӑртура яланах малта.

 

## Димăпа аслашшĕ.

— Шутла-ха, çынна алă мĕн тума кирлĕ? — ыйтрĕ пĕррехинче аслашшĕ.

— Мечĕкле выляма, — шухăшламасăрах хуравларĕ Дима.

— Тата мĕн тума-ши? — тĕпчерĕ аслашшĕ.

— Кашăк тытма.

— Тата мĕн тума?

— Юхан шыва вĕтĕ чулсем пеме.

Тĕрĕсех хуравларĕ Дима. Анчах алă ĕçлеме кирлине вăл пĕлеймест-ха.

Е. Пермяк.

? Тăваттăн пӳрте кĕреççĕ, пĕри чăлана кĕрсе юлать.



з в е н о́

за зе зо зу зы зи

са|сă

ва|за

Зи|на

Си|ма

зо|о|парк

слон

зве|но

зна|чок

# Зз



**Пахчаçăсен звени.**

Çулла шкул ачисем колхоз пахчинче ĕçлерĕç. Вĕсем çум çумларĕç, йăрансене кăпкалатрĕç.

Пахчана шăварма колхозăн çумăр агрегачĕ пур. Вăл ĕçлеме тытăнсанах çумăр пĕрĕхме пуçлать.

Тăрăшни сая каймарĕ. Тухăçлă пахча çимĕç ӳстерчĕ пахчаçăсен звени.





р ó □ а

## Арăсланпа йытă çури.

(Чăн пулни.)

Зоопаркра тискер кайăксем кăтартнă.

Пĕр çын йытă çури илсе пынă. Йытă çурине арăслан читлĕхне янă.

Арăслан йытă çурине тивмен. Вĕсем пĕрле апат çинĕ, пĕрле çывăрнă.

Йытă çури зоопаркра пĕр çул пурăннă. Çулталăк иртсен вăл чирлесе вилнĕ.

Арăслан апат çиме пăрахнă. Вăл йытă çурине ыталанă та пилĕк кун хускалмасăр выртнă.

Улттăмĕш кунне арăслан вилнĕ.

Л. Толстой.



ш а р

ва фа ву фу ве фе

шав
шарф
Ве|ня
Фе|ня

ву|тă
фут|бол
торф
гра|фин

# Фф



**Фермăра.**

Феня аппа фермăра ĕçлет.

Фермăра яланах тирпейлĕ. Урайне пăчкă кĕрпи сарнă, стенисем шап-шурă.

Сыснасем патне апат пĕчĕк вакунсемпе илсе пыраççĕ.

Феня аппа сыснисем шултра, ăратлă.

Кăçал Феня аппана Ĕç Мухтавĕн орденне пачĕç.





т е л е _ о́ н

## Светофор.

Пĕррехинче эпир хулара пултăмăр. Урам урлă каçма тăрсан анне тăпах чарăнчĕ.

— Мĕншĕн? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Курмастăн-им? Авă светофор çине пăх, — хуравларĕ анне.

Чăнах та, светофорăн хĕрлĕ куçĕ çунать иккен.

— Нумай кĕтмелле-и? — тĕпчетĕп эпĕ.

— Кăштах тăхтар. Машинăсем иртĕç... вара эпир те хускалăпăр.

Светофор çинчен куçа илместпĕр. Акă унăн сарă куçĕ, унтан симĕсси çуталчĕ. Вара эпир те урам урлă каçрăмăр.

Б. Житков.




□ у р н а́ л

шу жу ши жи ше же

Же|ня
ё|шен|нĕ
Жуч|ка
ă|шă

жи|лет
ши|нель
жи|раф
ши|фер

# Жж



**Хисеплĕ çынсем.**

Атнер пичче — платник те, слесарь те. Женя аппа — ăста çĕвĕç.

Кăçал вĕсем çĕнĕ çурт лартрĕç. Çурчĕ кирпĕчрен, пӳлĕмĕ нумай. Кухньăра — газ, холодильник. Шыв урамран пăрăх тăрăх пӳртех кĕрет.

Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.

ча ца чи ци че це



□ й р к у л ь

цех
цирк
а|ка|ци

стан|ци
стра|ни|ца
кон|церт

# Цц



## Циркра.

Канмалли кун ашшĕпе Федя цирка кайрĕç.

Халиччен Федя циркра пулман. Тĕлĕнмелли нумай кунта. Арăслансем ункă витĕр сикеççĕ. Клоун тĕрлĕ мыскара туса култарать. Упа та ташлать иккен циркра.

Цирк Федьăна питĕ килĕшрĕ.



□ ё т к а

ща щу щĕ щё щи

плащ мун|ча шă|чă
е|щĕк пах|ча шу|кăль
чăл|ха ра|ща щёт|ка

# Щщ



Пурăнать пулсассăн
туслă
супăньпе,
шăл щёткипе, —
ку ача вăл
питĕ ăслă,
питĕ кăмăллă,
чипер.

В. Маяковский.

Хăвна таса тыт —
сывлăхлă пулăн.

хаваслă
пысăк
çĕнĕ
пĕчĕк

_____ плащ _____ концерт

_____ щётка _____ цирк





п л а

## Ещĕкри калча.

Март уйăхĕ. Уроксем пĕтрĕç. Анчах ачасем киле васкамарĕç.

Хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Пĕрисем ещĕксене тăпра тултараççĕ. Теприсем помидор, купăста вăрри акаççĕ. Хĕрачасем шăвараççĕ.



Часах кашни ещĕкрех емешĕл калча çĕкленĕ. Пахчара çĕр ăшăнса çитĕ. Ачасем калчасене йăрансем çине куçарĕç.

Кирлĕ сас паллисем хушса çыр.

Шăп.ăк, кăсă., уй.п, çер.и, х.лат.



м ă р

се сье ре рье се съе

кĕсье
Марье
Патăрьел

Мăньял
съезд
разъезд

# Ъ Ь

## Патăрьел тăрăхĕнче.

Патăрьел районĕ Чăваш Республикин кăнтăр енче вырнаçнă. Ку таврара пулăхлă хура çĕрсем тăсăлаççĕ.

Сăртсем кунта сахал. Вĕсем çӳллĕ мар. Уйсем анлă та тӳрем.

Шывсем Патăрьел тăрăхĕнче тарăн çырмасем çурман. Вĕсем улăхпа танах юхаççĕ тейĕн.

Ял çыннисем кунта тулăх тырă-пулă ӳстереççĕ.

# ВУЛАТПĂР, ÇЫРАТПĂР.







Шурӑ юр ирӗлет,
ҫеҫен хир чӗрӗлет,
ешӗл курӑк ӳсет...
Ку хӑҫан пулать-ши?

Хӗвел хытӑ хӗртет,
ӑшӑ ҫил вӗркелет,
сар ыраш ҫитӗнет...
Ку хӑҫан пулать-ши?

## Ҫулталӑк.

Ҫулталӑкра вуникӗ уйӑх. Вӗсен ячӗсем:

кӑрлач (январь)
нарӑс (февраль)
пуш (март)
ака (апрель)
ҫу (май)
ҫӗртме (июнь)
утӑ (июль)
ҫурла (август)
авӑн (сентябрь)
юпа (октябрь)
чӳк (ноябрь)
раштав (декабрь)

Сивӗ хӗл иртрӗ. Шыв-шурлӑ ҫур ҫитрӗ. Часах ӑшӑ ҫу кунӗсем пуҫланӗҫ. Ҫу хыҫҫӑн тулӑх кӗр килсе ҫитӗ.

 

Хир илемĕ каять,
сĕм вăрман çаралать,
пĕрмай çумăр çăвать...
Ку хăçан пулать-ши?

Хирсенче юр анчах,
çырмара пăр анчах,
сивĕтет аванах...
Ку хăçан пулать-ши?

К. Иванов.

? Пĕр йывăçăн 12 турат. Кашни турачĕ çинче 4 йăва. Кашни йăвара 7 çăмарта.

Çĕнĕ çул кăрлачăн пĕрремĕшĕнчен пуçланать.

Çулталăкăн юлашки кунĕ — раштавăн вăтăр пĕрремĕшĕ.

Çулталăкра вуникĕ уйăх.

Кашни уйăхра вăтăр е вăтăр пĕр кун. Нарăс çеç çирĕм сакăр е çирĕм тăхăр кунлă.

Кашни уйăхăн тăршшĕ тăвата эрне ытларах.



## Çуркунне.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел сават тĕнчене
хĕл ыйхинчен вăратса.

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
ешĕл тумтир тăхăнать,
çеçен хир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.

К. Иванов.

Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем çыр.

1) Ăшă, ырă … .
2) Сивĕ, хаяр … .
3) Ылтăн, тулăх … .

хĕл
кĕркунне
çуркунне



**Иван Яковлевич Яковлев.**

Чăваш çырулăхне йĕркелесе яракан çын Иван Яковлевич Яковлев пулнă. Вăл чăваш ачисем валли букварь çырса кăларнă. Унтанпа çĕр çирĕм çул ытла иртрĕ ĕнтĕ.

ЯКОВЛЕВ БУКВАРĔНЧЕН.

**Сармантей.**

Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă тет. Ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет тет, сарă чăххи те какалать тет...

? Эсĕ ку юмаха илтнĕ-и? Малаллине аса илсе каласа пар.

Кирлĕ сас паллисем хушса çыр.

1) Феня аппа □ермăра ĕçлет.

2) Анне □уфайка çĕлет.

## Тилĕпе кăкшăм.

(Юптару.)

Пĕр арăм хире тырă вырнă çĕре кăкшăмпа сĕт илсе пынă. Çав кăкшăм патне тилĕ йăпшăнса пырать те пуçне чиксе сĕте ĕçет ярать. Анчах кăкшăмран унăн пуçĕ тухмасть.

— Ну, кăкшăм, алхасса çитĕ ĕнтĕ, ман киле каймалла тата, ярах ĕнтĕ, кăкшăм тус, — тесе калать тет хăй. Унтан татах:

— Э, кăкшăм, алхасса тăрантăн пулĕ-çке ĕнтĕ е чăнахах та ярас мар тетĕн-и çак?

Хуть те мĕн ту, кăкшăм унăн пуçĕнчен уйрăлмасть тет. Тилĕ шалт çилленсе çитет:

— Чим-халĕ, эппин, эпĕ сана!.. Ирĕккĕн ямастăн пулсан ак шыва путарам...

Хайхи тилĕ çырма хĕррине чупса пырать те кăкшăма путарма тытăнать. Кăкшăмĕ вара путасса путнă та, анчах тилле те хăйĕнчен хăварман.

Предложенисем йĕркелесе çыр.

1) пуçне, чикнĕ, тилĕ, кăкшăма.
2) сĕте, вăл, янă, кăкшăмри, ĕçсе.
3) кăкшăмран, пуçĕ, унăн, анчах, тухман.

 

**Чăваш халăх сăвăçи.**

Константин Васильевич Иванов — чăвашсен чаплă сăвăçи. Унăн «Нарспи» кĕнекине халăх юратса вулать. Ăна вырăсла, тутарла тата ытти чĕлхесене куçарнă.

К. В. Ивановăн пултарулăхĕ нумай енлĕ пулнă. Вăл ялти шкултах ӳкерчĕксем тума юратнă, сăвăсем çырнă. Каярахпа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, ĕçленĕ. Кунта вăл И. Я. Яковлева пулăшнă: чăвашла букварь валли ӳкерчĕксем тунă.

Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.

| | |
|---|---|
| 1) Анюк ... ялĕнче пурăнать. | Шупашкар |
| 2) Аппăшĕ ... хулинче вĕренет. | Кинчер |
| 3) ... варринче утравсем пур. | Атăл |



## Сентти.

Чипер ача Сентти пур,
чупса ҫӳрет урамра.
Кӗвентине утланса
ача вылять лашалла.
Аслă урам тăршшӗпе
чиксӗр тусан кăларать,
хура чикан пек хура
каҫпа киле таврăнать.
Чипер ача Сентти пур,
чупса килет лашипе,
хăйӗн пӗчӗк чӗлхипе
пакăлтатать инкӗшпе.

К. Иванов.

### Сыпăксем хушса сăмахсем ту.

Сӗ..., хӗ..., ав..., ар..., ал..., ме..., чӗ... .



## Чĕкеç.

Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕ,
кунĕпе вĕçсе çӳрет вăл,
пĕртте канма пĕлмест вăл,
шăна-пăван пуçтарать,
чĕпписене тăрантарать.

К. Иванов.

### Предложенисене уйăрса çыр.

Çуркунне çитрĕ кайăксем ăшă енчен вĕçсе килчĕç вĕсемваскасах йăва çавăраççĕ.

### Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем туп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| пĕчĕк | лайăх | тĕттĕм | инçе |
| аякра | тĕксĕм | аван | вĕтĕ |

## Шăнкăрч.

Хамăн тăван çĕршыва
вĕçсе килтĕм васкаса.
Çуркуннене мухтаса
эп юрлатăп савăнса.

Йăпăрт-йăпăрт йăвана
кĕре-кĕре пăхатăп,
ăшă вырăн тумашкăн
тĕксем, çӳçсем пухатăп.

Н. Шелепи.

? Сирĕн килте шăнкăрч йăви пур-и?
Ăна кам турĕ?
Йăвана шăнкăрчсем килсе вырнаçрĕç-и?

### Предложенисем йĕркелесе çыр.

1) хыççăн, шăнкăрчсем, вĕçсе, кураксем, килеççĕ.
2) çунат, вĕсем, юрлаççĕ, çапса.
3) урамра, сĕлкĕшленчĕ, юр, шурă.

? Хура йăмăкăн юрри хитре.

(Шăнкăрч.)

## Упа.

Эпĕ упа-утаман,
ик урапа утакан,
пур кайăкран хытăрах
мĕкĕрттерсе улакан.

Çăва тухсан вăрманта
вĕллесене ватакан,
тутлă пылне çиекен,
ĕнесене тытакан.

Н. Шелепи.

? Упа çинчен эсĕ тата мĕнле сăвă пĕлетĕн? Ытти чĕр чунсем çинчен сăвăсем пĕлетĕн-и?

Предложенисене урăхлатса çыр.

Т ĕ с л ĕ х. Упа пыл юрать. — Упасем пыл юратаççĕ. Мулкач йăва çавăрмасть. Вăл ирĕке юратать. Çавăнпа унăн çăмĕ яланах таса.

? Пыл юрататăп. Хĕл каçах шăтăкра ыйха туртатăп.

(Упа.)



## Тăван çĕршыв.

Хамăр пурăнакан çĕршыва эпир Тăван çĕршыв тетпĕр. Кунта пирĕн асатте-асанне, атте-анне çуралнă. Кунта эпир тăван чĕлхепе калаçатпăр, çыратпăр, вулатпăр.

Эпир хамăр çĕршыва анне тетпĕр. Вăл пире хăйĕн çăкăрĕпе тăрантарса ӳстерет, хăйĕн шывне ĕçтерет...

Тĕнчере пирĕн çĕршывсăр пусне урăх çĕршывсем те пур. Анчах этемĕн амăшĕ пĕрре кăна, Тăван çĕршывĕ те унăн пĕрре çеç.

К. Ушинский.

Предложенисене уйăрса çыр.

Пирĕн Тăван çĕршыв пысăк унта тĕрлĕ халăх пурăнать эпир Тăван çĕршыва юрататпăр.



## Юратнӑ ҫӗршывӑмӑр.

Юрататпӑр эпир, чӑвашсем, хамӑрӑн республикӑна. Унӑн улӑхӗсене, вӑрманӗсене, юхан шывӗсене юрататпӑр.

Чӑвашсем ҫӗре анне теҫҫӗ. Вӗсем мӗн авалтанпах ҫӗр ӗҫлесе пурӑннӑ.

Чӑваш вӑрманӗсем питӗ пуян. Вӑрманта улма-ҫырла, мӑйӑр, кӑмпа иксӗлми. Унта тӗрлӗ тискер кайӑк нумай.

Пирӗн халӑх авалтанпах хӑйӗн кӳршисемпе туслӑ пурӑнать.

Юхма Мишши.

Кирлӗ сӑмахсем хушса хӑвӑн адресна ҫыр.

Чӑваш Республики, ... районӗ, ... ялӗ, ... урамӗ, ... ... ... .



## Карăшпа каюра.

Пĕчĕк карăш аякри ăшă енчен тăван çĕр-шывне, çурçĕре, васканă. Карăш çулла пирĕн тăрăхра чĕпĕ кăларать. Хĕл каçма вара инçетри Африкăна вĕçсе каять.

Карăша вĕçме йывăр. Унăн çуначĕсем пĕчĕк. Вăл тĕллĕн-тĕллĕн вĕçет, тĕллĕн-тĕллĕн çуран утать.

Çул çинче карăш каюрана тĕл пулнă.

— Кам эсĕ? Ăçталла çул тытатăн? — ыйтнă карăшран каюра.

— Эпĕ — карăш, ăшă енчен тăван çĕршыва таврăнатăп.

Карăш каюрана аякри Африка çинчен каласа панă.

— Мĕншĕн эсĕ яланах ăшă çĕршывра пурăнасшăн мар? — тĕлĕннĕ каюра. — Мĕншĕн çулсерен пиншер çухрăмран вĕçсе килетĕн?



Урусене те юн тухичченех амантса пĕтернĕ. Хурчка та тытма пултарать сана. Мĕншĕн эсĕ çак тертсене куратăн? Мĕн илĕртет сана сивĕ çĕре?

— Тăван çĕршыв... — хуравланă карăш.

В. Сухомлинский.

Предложенисем туса çыр.

| | |
|---|---|
| 1) Автан ... . | какалать |
| 2) Хур ... . | авăтать |
| 3) Вăкăр ... . | макăрать |
| 4) Ача ... . | мĕкĕрет |

Предложенисенчен калав йĕркеле.

Симĕс курăк çĕкленет.
Хĕвел хĕртсе пăхать.
Юр ирĕлсе пĕтрĕ.
Çуркунне çитрĕ.

 

## Виççĕмĕш космонавт.

Андриян Григорьевич Николаев — виççĕмĕш космонавт-лётчик. Совет Союзĕн Геройĕ ятне вăл икĕ хут илчĕ. Хăйĕн ытти космонавт тусĕсем пекех, Андриян — хăюллă çын.

Чăваш ачисемшĕн Андриян Николаев уйрăмах çывăх. Вăл пирĕн ентеш-çке!

Паттăр космонавтăн тăван ялĕ — Шуршăл.

Шуршăл хитре вырăнта вырнаçнă. Ял урамĕсем тирпейлĕ, ешĕл йăмраллă. Ял çумĕпех Çавал шывĕ юхса иртет.

Андриян Николаев вĕреннĕ Шуршăлти шкулта халĕ музей. Музейра космонавт вĕреннĕ класс, вăл ларнă парта пур. Шуршăлти колхоз та космонавт ячĕпе хисепленет.

Юхма Мишши.



**Натали кĕпе тĕрлет.**

Натали кĕпе тĕрлет.
Кам валли
çав тери хитрелетет
Натали?
Тап-таса юр евĕрлĕ
шур пире
хĕрлĕ, симĕс çиппеле
вăл тирет.
Сарăпа сенкер хушать
тĕлĕпе.
Ку хĕвел пек курăнать,
пĕлĕт пек.

П. Хусанкай.

Кирлĕ çĕрте çемçелĕх палли çыр.

Марине тĕрĕ тĕрлет... . Тĕрри хитре пулат... . Ваçук кимĕ ăсталат... .

## Сăпка юрри.

Упа кĕчĕ шăтăкне,
— Çывăр, — терĕ çурине.
Тилĕ кĕчĕ йăвине,
çывăратрĕ пепкине.

Эс те, шăллăм (йăмăк), куçна хуп,
куçна хуп, куçна хуп...

П. Эйзин.

## Сехет.

— Шăк-шак! Шăк-шак! —
ерипен шаккать сехет.
— Шăк-шак! Шăк-шак! —
вăл куçа хупма сĕнет:
— Лăпкă çывăр ăшăнса,
тĕлĕкре те савăнса.
Шăк-шак!

? Санăн пĕчĕк йăмăку е шăллу пур-и?
Вăл мĕн ятлă?
Эсĕ ăна пăхатăн-и?

Çырса ил. Кирлӗ çӗрте çемçелӗх палли ларт.

Гал.ӑн пӗчӗк шӑллӗ пур.
Галя ӑна питӗ юратат... .
Вӑл унпа вылят... .

## Аннерен пахи çук.

Пӗр ача пасарта амӑшне çухатнӑ тет те шырать тет. Çынсем унран:

— Мӗнлерехскер сан аннӳ? — тесе ыйтаççӗ тет.

— Ман анне пек чиперри, Атӑл хӑви пек яштаки, çут уйӑх пек илемли ку пасарта пулас çук. Ун пек лайӑххине ниçта шыраса та тупас çук, — хуравлать тет ача.

Хай ача каярахпа амӑшне шыраса тупсан çынсем пӑхса тӗлӗнчӗç тет: унӑн амӑшӗ пек тискер сӑнли, чапрас-чӑлаххи урӑх никам та пулман тет.

Çавӑнпа каланӑ пуль харпӑр хӑйӗн усалли те паха курӑнать тесе.

Çывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене тупса çыр.

Чипер, усал, хаяр, хитре, илемлӗ, кӑмӑллӑ, илемсӗр, тараватлӑ, яштака, нӗрсӗр, тӳп-тӳрӗ, йӑрӑс.

## Çурхи юрă.

Сип-симĕс курăк хушшипе
юхать çурхи шыв-кĕмĕл.
Çĕлетрĕ чăлтăр шур кĕпе
чиен черченкĕ тĕмĕ.
Уçланкăра шăтать серте,
кăвак чечеклĕ çеçпĕл.
Кĕрлерĕ трактор уй-хирте,
таçта сас пачĕ кĕпшĕл.
Ăшша туйса вĕçет хăлат
çунаттине сармасăр.
Сирень шăрши тулать яла,
тăри юрлать канмасăр.
Çĕршыв çиçет илемĕпе,
чунра — чи ырă ĕмĕт...
Ем-ешĕл курăк хушшипе
шăнкăртатать чĕр кĕмĕл.

Ю. Петров-Вирьял.

Çаксем мĕнсем? Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсемларт.

Хăлат, кĕпшĕл, тăри —... . Çĕмĕрт, йăмра, юман —... . Çеçпĕл, серте, пултран —... .

Çăраççисем: йывăççем, кайăксем, ӳсентăрансем.

## Çĕнтерӳ кунĕ.

Çур ĕмĕр каялла пирĕн çĕршывăн нумай хулипе ялĕ çиййĕн вăрçă кĕрлесе иртнĕ. Фашистла Германи халăхсене чура тăвасшăн пулнă. Фашистсем тĕнчере «çĕнĕ йĕрке» тума шут тытнă.

Тăвата çул пынă Тăван çĕршывăн аслă вăрçи. Вăл çав тери хăрушă та йывăр пулнă. Нумай хулапа ял ишĕлнĕ, çунса кĕлленнĕ.

Вăрçăра нумай çын вилнĕ, аманса сусăрланнă. Вăрçа пула нумай вата-вĕтĕ, ача-пăча тăлăха юлнă. Халăх çав тери пысăк хурлăх, нуша тӳснĕ.

Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăхсем фашистсене çĕнтернĕ-çĕнтернех.

Тăванла ытти халăхсемпе танах чăвашсем те вăрçăра паттăррăн çапăçнă.

Çак вăрçăра çĕнтернĕ ятпа çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче çулленех Çĕнтерӳ кунне паллă тăваççĕ.

### Предложенисене уйăрса çыр.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи тăвата çул пынă ку вăрçăра чăвашсем те паттăррăн çапăçнă вĕсенчен нумайăшĕ киле таврăнайман.

## Чап монуменчĕ.

Шупашкарта, Атăлăн çӳллĕ çыранĕнче, çамрăк парк ешерет. Ун варринче капмар палăк — Чап монуменчĕ. Ку палăка Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çĕнтернĕ ятпа лартнă.

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче кунта çулленех халăх нумай пухăнать. Çынсем Çĕнтерӳ кунне уявлама таçтан-таçтан та килеççĕ.

Палăк умĕнче сӳнми вут — асăну вучĕ çунать. Çынсем палăк патне чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Вĕсем вăрçăра вăхăтсăр вилнисене асăнса пуç таяççĕ.

❓ Сирĕн ялта вăрçăран килмен салтаксене асăнса лартнă палăк пур-и?
Палăк çинчен каласа пар.
Вăрçăра пуç хунă паттăрсене асăнса эсир çав палăк патне чечексем хуратăр-и?

## Пĕртăван паттăрсем.

Муркаш районĕнчи Исетеркке ялĕнчи Татьяна Николаевнăпа Алексей Илларионович сакăр ывăл пăхса ӳстернĕ. Вĕсем саккăрăшĕ те Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă.

Иван вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех пуçне хунă. Шăллĕ вилнине пĕлсен Кĕркурипе Александр хăйсен ирĕкĕпе фронта кайнă. Хĕрӳ çапăçура Кĕркурин пурнăçĕ те татăлнă. Вилнĕ хыççăн ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.



Якур пĕр çапăçура тăшман дзотне хăй ӳчĕпе хупланă. Павăл та Тăван çĕршыва хӳтĕлесе вилнĕ. Фролпа Родион вăрçăра йывăр аманнă. Вĕсем те вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Александрпа Михаил та вăрçăра паттăр çапăçнă.

Сакăр паттăр ятне ял çыннисем яланах асра тытаççĕ. Ялти пĕр урама Алексеевсен ятне панă. Урам вĕçне паттăрсен амăшне асăнса палăк лартнă.

Çырса ил.

Пире вăрçă кирлĕ мар,
миршĕн пурте кар тăрар!



## Пĕрремĕш панулми.

Алёна пӳрт умне икĕ улмуççи лартрĕ. Пĕрине — амăшĕ, теприне — асламăшĕ ячĕпе.

Пĕр çул шăварчĕ улмуççисене хĕрача, икĕ çул... Виççĕмĕш çулхине амăшĕн улмуççийĕ çинче пĕртен-пĕр чечек çурăлчĕ. Унтан пĕртен-пĕр панулми тĕвĕленчĕ.

Кĕçех панулми пиçсе çитрĕ. Пĕррехинче Алёна сада тухрĕ. Вăл амăшĕн улмуççийĕ çинчи панулмине татса кĕчĕ. Ăна вăл çурмаран касса икĕ пĕчĕк турилкке çине хучĕ.

— Анне, асанне, — терĕ вăл, — панулми çийĕр, вăл сирĕн улмуççи çинче çитĕннĕ. Панулмийĕ тутлă пултăр.

Савăннă амăшĕпе асламăшĕ Алёна çине ăшшăн пăхрĕç.

В. Сухомлинский.



Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп:

| | | |
|---|---|---|
| ăшă | шăрăх | пысăк |
| сулхăн | сарлака | хăвăртах |
| анлă | ерипен | капмар |
| хуллен | сивĕ | часах |

**Пăрчăкан.**

— Пăрчăкан, пăрчăкан,
ма çунатна пăчăртан?
Тăрăс-тăрăс сиккелен,
хӳрӳне пĕрмай силлен,
мĕн пулнă вара паян?

— Эппинех, сана калам:
лупас хыçĕнче — йăвам,
йăвара — тăват пепкем,
тăваттăш те тĕкленмен.



Эс илесрен чунăм çук,
эс тивместĕн пуль, Ваçук?

— Эх, пăрчăкан, пăрчăкан,
эс ахалех пăчăхан!
Кайăк чĕппине Ваçук
нихăçан та тивес çук.

Стихван Шавли.

## Кирлĕ сăмахсем хушса çыр.

1) ... шăнкăрч йăви тăвать.
2) Тўпере ... юрă шăрататъ.
3) ... чăхсене апат паратъ.
4) ... шăши тытать.

тăри
ача
тăмана
хĕрача

## Сăмахсене сыпăкласа вула.

Акăш, чăх, автан, хур, пăрчăкан, кăвакал, çерçи, шăнкăрч, ўхĕ, тăмана.



## Пĕрчĕ.

Атте сĕтел умĕнчи пукан çинче ларать. Эпир — сĕтел хушшинче. Апатланатпăр. Пурсăмăр та тирпейлĕ пулма тăрăшатпăр. Ванюк шăллăм çеç тăп лара пĕлмест. Вăл куркинчи сĕтне тăкнă, çăкăрне тĕпретнĕ.

Атте ун çине пăхса илчĕ те:

— Эсĕ, Ванюк, хăçан тирпейлĕрех пулатăн? — тесе ыйтрĕ. — Çăкăра ун пек ан тĕпрет. Çăкăр вăл пĕрчĕрен пулать. Пĕр пĕрче хĕрхенме пĕлмен çын çĕр пĕрче хĕрхенми пулать. Ун пек юрамасть, ачам.

Ванюк вăтаннипе хĕрелсе кайрĕ. Вăл каскасах сĕтел çинчи тĕпренчĕксене пĕр çĕрелле пуçтарчĕ.

Иллек Микулайĕ.



Кирлӗ сас паллисем хушса ҫыр.

1) Ачасем ҫ.рлана кайнӑ.
2) Юманӑн вулли ҫ.рӗп.
3) Кӑҫал .раш ӑнса пулчӗ.

Сыпӑксем хушса сӑмахсем ту.

Ҫӑ... , пӗр... , шӑл... , кур... , пу... , сӗ... .

## Пысӑк курка.

Ҫак пӗчӗк шкулта икӗ класс ҫеҫ.

Пысӑк переменӑра ачасене сӗт ӗҫтереҫҫӗ. Сӗтне ачасем валли Марье инке илсе килет. Вӑл ывӑс ҫине ҫирӗм пилӗк курка лартса тухать. Кашни класӗнчех ҫирӗм пилӗк ача-ҫке!

Столовӑйра ҫирӗм тӑватӑ курка пӗр пеккисем, пӗри вара пысӑкрах.

Малтан столовӑя яланах пӗрремӗш класс



кĕрет. Ачасем ывăс тавра хĕвĕшеççĕ. Пысăк курка енне нумай алă кармашать. Анчах ăна пĕри çеç илме пултарать-çке. Телейли çине нумайăшĕ ăмсанса пăхать.

— Мĕнле япăх ачасем, — кулянать кун пек чух Марье инке.

Кĕçех иккĕмĕш класс çитет. Ачасем ывăс çинчи пĕчĕк куркасене васкамасăр илеççĕ. Пысăк курка тăрса юлать. Кая юлнă ача вара пысăк куркана вăтанчăклăн илет.

— Мĕнле ырă ачасем... — савăнса мухтать вĕсене Марье инке.

В. Сухомлинский.

Кирлĕ сăмахсем хушса çырса ил.

| | |
|---|---|
| Аннапа ... кăмпана кайрĕç.<br>Вĕсем хыççăн ... та чупрĕ. | Марине<br>Улай |



## Тул çутăлать.

Ҫăлтăрсем сӳнеççĕ
ерипен, илемлĕн.
Уйăх шурса çитрĕ
çӳллĕ тӳпере.

Улăхра, шăрçа пек,
кĕмĕлĕн-мерченĕн
чăмăртанчĕ сывлăм —
çакăттăм мăя.

Халĕ çĕкленес пек
вашават хĕвелĕ
тухăçа илемлĕн
çулăм ӳкерет.

Эреветлĕ шăпчăк
уншăн хĕпĕртенĕ,
эх, юрри-çке уççăн
чӳхенсе каять...

И. Ивник.

Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сас паллисем çыр. Тупсăмне туп.

? Утса-чупса пынă чух
кĕм. л ç.рĕ тухрĕ .крĕ.

(Сывлăм.)



## Талăк.

Эпир пурăнакан Çĕр чăмăр. Ун тавралла — тĕнче уçлăхĕ.

Çĕр хăйĕн тĕнĕлĕ тавра тата Хĕвел тавра çаврăнать.

Çĕр хăйĕн тĕнĕлĕ тавра пĕр талăкра çаврăнса çитет. Çак вăхăтра çĕрпе кун ылмашать. Тĕттĕмленет, каç пулать, тул çутăлать, кун пуçланать.

## Вăхăт.

Вăхăта сехетпе виçеççĕ. Сехет çинчи çаврашкана вуникĕ пая пайланă. Кашни пайĕ пĕр сехете пĕлтерет.

Сехетĕн икĕ йĕп. Пĕр йĕппи вăрăм, тепри — кĕске. Кĕске йĕппи сехетсене кăтартать. Вăл майĕпен куçать, талăкра икĕ хут çеç çаврăнать. Вăрăм йĕппи кашни сехетре пĕр çаврăм тăвать.



## Каç пулать.

Хĕвел каçа сулăнать,
сăрт хыçнелле пытанать,
сулхăнланать сĕм вăрман,
уçă сывлăш палăрать.

Каçхи хĕвел ылтăн пек
йывăç витĕр курăнать,
сарă вĕçен кайăк пек
унăн çути вăй вылять.

Н. Шупуççынни.

Пăнчăсем вырăнне у е ў сас палли çыр.

1) .хĕ вăрманта пурăнать.
2) Раман .хă турĕ.
3) Ял çумĕнчи к.лĕ тарăн.

# ХАЛĂХ СĂМАХЛĂХĔНЧЕН.

## Мулкач.

Лапка-лапка юр çăвать,
мулкач сикет, йĕр тăвать.

## Шăши ăçта?

— Шăши ăçта?
— Шăтăкра.
— Шăтăкĕ ăçта?
— Шыв тулнă.
— Шывĕ ăçта?
— Вăкăр ĕçсе янă.
— Вăкăрĕ ăçта?
— Кĕтӳре.
— Кĕтĕвĕ ăçта?
— Улăхра.
— Улăхĕ ăçта?
— Йăлăмра.

Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сас паллисем лартса çырса ил.

Кĕтӳ улăх... çӳрет. Кĕтӳ... ĕнесемпе пăрусем, сурăхсемпе качакасем пур.

## Пӳрне юмахӗ.

— Атьăр, кăвас хурар! — тет пуç пӳрне.
— Çăнăх çук, — тет шĕвĕр пӳрне.
— Кивçен илер! — тет вăта пӳрне.
— Илсен парасси! — тет ятсăр пӳрне.
— Çиес те тарас! — тет кача пӳрне.

## Тăри юрри.

Тăр-тăри, тăр-тăри,
ирпе ирех тăтăр-и,
пăри пĕрчи акрăр-и,
пăри пăтти çакрăр-и,
сарă çуне сапрăр-и,
çиме мана лартрăр-и?

Предложенисем йĕркеле.

| | | |
|---|---|---|
| Нина | карап | савалать |
| Шура | кĕнеке | ӳкерет |
| Роман | хăма | вулать |

## Куракпа чĕпписем.

Курак калать тет:
— Ах, чĕппĕмсем, хура пулсан та хамăнах.

## Çерçи.

Çерçи шыва кĕрсе тухсан тăмаланнă та хăй мĕлки çине пăхса:

— Ах анчах, çут тĕнчере манран пысăк кайăк пур-ши? — тесе тĕлĕнет тет.

## Вăрăмтуна.

Вăрăмтуна шăрăх çанталăкра мухтанать тет:

— Вăрмантан уя тухса вĕçĕттĕм те, пĕр пăт çăвăм шăранасран хăратăп, — тесе калать тет.

## Кашкăра ан шан.

Тилĕ мулкача юлташа чĕнчĕ тет. Тытăнчĕç тет иккĕшĕ вутă касма. Ĕçленĕ чух мулкач ăнсăртран урине хуçрĕ тет. Вăрман тухтăрĕ кашкăр пулнăран тилĕ мулкача ун патне леçсе хăварчĕ тет. Тепререн тилли кашкăр патне пычĕ тет те:

— Мулкача сыватрăн-и, ĕнтĕ киле илсе каясчĕ, — тесе калать тет.

— Тахçанах сыватрăм, тирне илсе кайма пултаратăн, — терĕ тет кашкăр. Мулкач тирне тухса пачĕ тет.

## Ӳсӗр ҫерҫи.

Ҫерҫи хӑнара пулнӑ тет. Ӗҫнӗ тет те ӳсӗрӗлнӗ тет. Ӳкнӗ те тапкаланса выртать тет ҫакскер.

— Тапӑп та пӗтӗм пӗлӗте ҫурса пӑрахӑп! — тесе ҫухӑрашать тет хӑй.

## Сурӑх, сысна тата упа.

Сурӑх хӑй ҫӑмне каснӑ чух:

— Каллех хуҫана куланай тӳлетӗп, — тесе калать тет.

Пахчана кӗнӗ сысна, хӑйне хытӑ хӗнесе ярсассӑн:

— Пахча хуҫисем ыран пахчана иртерех килме хушса хӗнерӗҫ пулмалла, — тесе шутлать тет.

Шӑтӑкра выртакан упа хӗлваррине ҫитсен тепӗр айккине ҫаврӑнса:

— Ах, ҫур ҫӗр ҫитрӗ пуль, — тесе калать тет.

Предложенисене улӑштарса ҫыр.

Т ӗ с л ӗ х . Ача кӗнеке вулать. — Ачасем кӗнеке вулаҫҫӗ. Упа хӗлле шӑтӑкра ҫывӑрать. Вӑл шӑтӑкран ҫуркунне тухать.

## Кам мĕне хапсăннă.

Пĕр çыннăн виçĕ ывăл пулнă. Ашшĕ вилес умĕн ачисене хăй патне чĕнтерет те çапла ыйтать:

— Кама мĕн кирлĕ: ăс кирлĕ-и е укçа кирлĕ-и?

Аслисем иккĕн ашшĕнчен нумайрах укçа пама ыйтаççĕ. Чи кĕçĕнни ăс ыйтса илет.

Ашшĕ вилсен çаксем уйрăмшар пурăнма пуçлаççĕ. Укçа илсе юлнисем ăспа пурăнма пĕлмесĕр мĕнпур укçине салатса пĕтereççĕ те çука юлаççĕ.

Ăс ыйтса илнĕ ывăлĕ ăспа пурăнса халĕ те пулин аван пурăнать тет.

Пăнчăсем вырăнне кирлĕ саспаллисем лартса çыр.

Аслă ывăлĕсем укçана, мула хапсăннă. Кĕçĕнни мула хапсăн... . Аслисем ашшĕнчен укçа пама ыйтнă. Кĕçĕн ывăлĕ укçа ыйт... , ăс пама ыйтнă.

Ваттисен сăмахĕ.

Вĕреннине (ăса) йăтса çӳреме кутамкка кирлĕ мар.

## Çĕвĕç.

Пуранна тет ĕлĕк-авал Йаван мучипе карчăкĕ. Вĕсен виçĕ хĕр ӳснĕ тет. Виççĕшĕ те сăнĕпе питĕ чипер пулнă, анчах ĕçлеме юратман.

Пĕррехинче çаксем аслă хĕрĕ валли кĕрĕк çĕлетме çĕвĕçе кĕртнĕ. Тепĕр кунне ирпе аслă хĕрĕ урай шăлчĕ тет те çӳппине кĕтесе пухса хучĕ тет. Кăнтăрла вăталăх хĕрĕ урай шăлчĕ тет. Çӳппине амăшĕ тухса тăкасса шанса вăл та кĕтесех тултарчĕ тет. Каçхине кĕçĕн хĕрĕ те çӳппе каллех çавăнтах купаларĕ тет.

Çакна кĕрĕк çĕлекен çĕвĕç сăнаса ларчĕ тет. Каçхине аслă хĕрĕ апат пĕçернĕ чух тăвар яма тăчĕ тет. Хайхи çĕвĕç унран пĕр ывăç тăвар ыйтса илчĕ тет те кĕтесри çӳп купи çине сапма тапратрĕ тет.

— Мĕншĕн çӳп çине тăвар сапатăн? — ыйтрĕ тет хĕр çĕвĕçрен хытă тĕлĕнсе.

— Тăварламасан çĕрет вăл! — хуравларĕ тет çĕвĕç кулса.

Виçĕ хĕр вăтаннипе хăмач пекех хĕрелсе кайрĕç тет. Сиксе тăчĕç те кĕтесри çӳппе çĕр хутах тасатрĕç тет. Çавăнтан кайран виç кунта пĕрре урай çума тытăнчĕç тет.

## «Ăслă» ывăл.

(Пăлхар халăх юмахĕ.)

Пĕррехинче ашшĕ хăйĕн ывăлĕсене çапла каланă:

— Ыран аннĕр кукăль пĕçересшĕн. Кам çийĕ? — тенĕ.

— Эпĕ! — кăшкăрса янă пĕр ывăлĕ.

— Кĕçех сысна пусатпăр. Ăна кам çийĕ?

— Эпĕ! — кăшкăрса янă çав ывăлех.

— Хур пусăпăр. Ăна кам çийĕ?

— Эпĕ, эпĕ! — кăшкăрнă çавскерех.

— Ыран хире сухана тухăпăр. Кам суха тăвĕ?

— Ялан эпĕ те эпĕ. Ан тив, ыттисем те мĕн те пулин туччăр, — тенĕ юлашкинчен вăлах.

**?** Ĕçрен пăрăнма тăрăшаканран тăрăхласа кулакан юмахсем эсĕ урăх пĕлетĕн-и? Каласа пар.

### Ваттисен сăмахĕ.

Ырă ут пуласси тихаран паллă. Ырă çын пуласси ачаран паллă.



## Кушак аҫипе ҫерҫи.

Пӗррехинче кушак аҫи хӗвел питтинче ӑшӑнса выртнӑ. Хайхискер ӑшӑ та тутӑ пурнӑҫпа киленсе куҫӗсене хупса мӑрлатнӑ. Сасартӑк вӑл юнашарах такам сассине илтет: «Чӗвик! Чӗвик!»

Куҫне уҫать те курать: валашка хӗрринче ҫерҫи ларать иккен. Темӗн сӑхать вӑл.

Кушак аҫи шартах сикнӗ. Вӑл шӑртне вирелле тӑратнӑ.

Ҫерҫи валашка тӑрӑх сиккелесе ҫывӑхах пырать. Кушак аҫи чалт! ҫеҫ сикет те ҫерҫие ярса тытать.

Анчах ҫерҫийӗ ватӑскер пулнӑ. Ватӑ ҫерҫие хывӑхпа улталаймӑн!

— Чим! Чим! — тет вӑл. — Эсӗ мана ҫиессе ҫийӗн те, анчах аса ил-ха. Паян, ҫывӑрса тӑрсан,



пит çурăн-и? Эсĕ куçусене те тасатман-çке. Аслă та ырă çынсем ирхине, çывăрса тăрсан, пит çăваççĕ, вара тин ĕçе пикенеççĕ.

— Чăнах та, пит çăваймарăм! — аса илнĕ хайхи кушак аçи.

Вăл чĕрнисене пытарать те çерçие вĕçертсе ярать. Унтан çăвăнма пикенет. Урине чĕлхипе йĕпете-йĕпете питне-куçне сăтăркалать. Çерçи пăхрĕ-пăхрĕ те пăрр! турĕ тет.

Çав вăхăтранпа кушак аçи апат умĕн мар, апат хыççăн питне çăвать тет. Ăна кура ытти кушаксем те апатлансан тин çăванаççĕ.

Предложенисем йĕркелесе çыр.

1) кушак, тытма, шăши, юрататъ.
2) çиет, вăл, те, сĕт.
3) çăвать, хыççăн, çинĕ, кушак, питне.



## Хресченпе упа.

(Белорус халăх юмахĕ.)

Пĕр хресчен вăрмана вутта каять. Ĕçлесе ывăнсан тунката çине канма ларать. Кĕтмен çĕртен ун патне упа тухать.

— Эй, этем, — мĕкĕрсе ярать упа, — атя иксĕмĕр тытăçса пăхар.

Пăхать хресчен упа çине. Ытла та пысăкскер вăл — ăçтан çыхланăн унпа.

— Тăхта, малтан санăн вăйна тĕрĕслесе пăхар, — тет ăна хресчен.

Вăл пуртă илет те тункатана варринчен çурать. Унта савăл çапса лартать:

— Çак тункатана тяппупа туртса çур. Вара эсĕ чăнах вăйли курăнĕ.

Упи нимĕн шутламасăрах тяппине хушăка чиксе ярать. Хресчен савăла çапать те кăларать.



Тунката çавăнтах упа тяппине хĕстерсе хурать. Мĕкĕрсех ярать упа.

— Ну, мĕнле, кĕрешес шухăш пур-и? — кулать хресчен.

— Çук, — тет упа, — çыхланмастăп.

— Çапла çав. Вăйпа çеç мар, ăспа та çĕнтерме пулать. Çакна ялан асра тыт, — тет хресчен.

Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене туп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| пысăк | тĕттĕм | кахал | хăюллă |
| хăравçă | ĕçчен | çутă | пĕчĕк |

Предложенисем йĕркелесе çыр.

| | |
|---|---|
| Хураçка — | чĕпсене сыхлать. |
| Марине | шăши тытать. |
| кушак | ăслă ыйтă. |



## Икĕ шапа.

(Испан халăх юмахĕ.)

Икĕ шапа ăнсăртран хăйма чӳлмекне кĕрсе ӳкнĕ. Вĕсенчен пĕри çемçешкерех те шиклĕрех пулнă. Вăл кăштах ишкеленĕ те:

— Манран пурпĕрех ишсе тухасси пулмасть,— тенĕ. — Мĕскер пустуй тапаçланас! Путас та вилес!

Путнă вара вăл.

—Çук, — тенĕ тепри, — путма эпĕ кирек хăçан та ĕлкĕрĕп. Ишем вăй пĕтсе çитиччен…

Нумай иртнĕ-и вăхăт, сахал-и. Мĕн ку? Шапа хăй айĕнче хăйма мар, темĕнле хытă япала пуррине туйнă. Пăхнă та хăй çу чăмăркки çинче ларнине курах кайнă.

Ише-ише шапа хăех çу ӳкернĕ иккен! Çакă çăлса хăварнă та ăна.



Предложенисем йĕркелесе çыр.

1) Павлуш, вулать, юмах.
2) Шура, кăмпана, кайнă, Машăпа.
3) парать, Нина, апат, чăхсене.

## Улине тĕлĕнет.

Пĕррехинче пиллĕкри Улине ашшĕпе пĕрле вырăс ялне кайнă. Урамра пĕчĕк ачасем вылянă. Вĕсем хĕрсе кайсах тем çинчен калаçнă.

Улине шалт тĕлĕннĕ.

— Атте, пăх-ха, хăйсем пĕчĕкçеç, вырăсла епле лайăх пĕлеççĕ. Манăн та çапла вĕренесчĕ.

Инçех те мар колхозăн ĕне ферми пулнă. Улине ĕнесем макăрнине илтнĕ те:

— Ĕнисем чăвашлах макăраççĕ тата, — тенĕ.

М. Сакмаров.

Учебное издание

**Тамара Васильевна Артемьева**
**Михаил Константинович Волков**
**Леонид Павлович Сергеев**

**ЧУВАШСКИЙ БУКВАРЬ**

Издание десятое

Под общей редакцией кандидата
педагогических наук **М. К. Волкова**

Редактор **Р. И. Крысина**
Художники **В. А. Смирнов, М. Ю. Николаев**
Художественные редакторы **Г. С. Самсонова, И. Е. Калентьева**
Технический редактор **Л. Н. Кондрашкина**
Корректор **Н. В. Григорьева**

ИБ 3067
ОКДП 2211191

Сдано в набор 11.01.2000. Подписано к печати 01.08.2000. Формат 70x90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 9,95+0,29 форз. Усл. кр.-отт. 41,54. Учетно-изд. л. 10,5+0,46 форз. Тираж 16000 экз. Заказ № К-1954. Изд. № 1. Цена «С» 32.

Чувашское книжное издательство, 428000, г. Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография РГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.


Аа Ӑӑ Бб Вв
Ĕĕ Жж Зз
Мм Нн Оо Пп
Уу Ӳӳ Фф
Щщ ъ Ыы ь


Гг Дд Ее Ёё
Ии Йй Кк Лл
Рр Сс Ҫҫ Тт
Хх Цц Чч Шш
Ээ Юю Яя

Чӑваш кӗнеке издательстви